25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
АВГУСТ
28
ЭРНЕКУН
201(6136) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВКП(б) Калинински райкомĕпе райсовет исполкомĕ тăратнă тăрăх, тырпулсене пухса кĕртнĕ çĕрте пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнăшăн тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

6. **«Партизан» колхоз** (колхоз председателĕ **Т. Яблоков**). Тырпулсене суйласа вырма колхоз районра чи малтан тухнă. 327 гектар çинчи тĕштырăсене 18 ĕçкунĕ хушшинче вырса пĕтернĕ. Уборкăра ялхуçалăх машинисемпе тата çавасемпе пуринпе те лайăх усă курнă. Государствăна тырă тăратмалли çулталăкри плана 50 процент ытла тултарнă, 154 центнер тырă панă. Колхоз кĕлтесене капана хывас тата авăн çапас ĕçсене аван туса пырать. **Андрей Игнатьев** ертсе пыракан чи лайăх бригада тырă вырас ĕçе чи малтан вĕçленĕ. Çак бригадăри **С. Андреев** тата **К. Сиватов** колхозниксем вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçленĕ, вĕсем кашни кунах çавапа пĕр гектара çити çулса пынă.

7. **Пушкин ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **З. Степанов**). Колхоз 322 гектар çинчи тĕштырăсене пĕтĕмпех машинăсемпе пухса кĕртсе, тырă вырас ĕçсене 15 ĕçкунĕ хушшинче вĕçленĕ. Кĕлтесене капана хывас ĕçе колхоз 90 процент, авăн çапас ĕçе 50 процент пурнăça кĕртнĕ. **Хохлаткин** ертсе пыракан 4-мĕш бригада тырă вырас ĕçе 13 ĕçкунĕнче туса пĕтернĕ. Колхоз тырпул тăратас плана ăнăçлăн пурнăça кĕртсе пырать, районра чи малтан Хĕрлĕ Çар фондне тырă панă.

8. **«Майăн пĕрремĕш» колхоз** (колхоз председателĕ **В. Иванов**). Колхоз тĕштырă культурисене 365 гектар çинчен 14 ĕçкунĕ хушшинче вырса пуçтарнă. Тĕштырă культурисен пĕтĕм çĕр лаптăкĕ çинче пучах пухас ĕçе лайăх организациленĕ. Государствăна 197 центнер тырă панă.

Совет Союзĕн Геройне Федот Никитич Орлова

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ, Совнарком тата ВКП(б) Обкомĕ Сире, чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлне, Совет Союз Геройĕн званине панă ятпа хĕрӳллĕн саламлаççĕ.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре Эсир кăтартнă хăюлăх, паттăрлăх, героизм республикăри ĕçсыннисене çĕнĕ çитĕнӳсем тата паттăр ĕçсем тума хавхалантараççĕ. Чăваш республикинчи рабочисем, колхозниксемпе интеллигентсем хăйсен пурнăçне шеллемесĕр ĕçлес, фронта татах та вăйлăнрах пулăшас, гитлеризма пĕтерсе тăкма, тăшмана çĕмĕрсе тăкма пĕтĕм вăя парас кăмăлпа çунаççĕ.

Фашистла тискер-кайăксене хирĕç пыракан çапăçусенче Сире çĕнĕ те паха çитĕнӳсем тума сунатпăр. Гитлерла йыткĕтĕвĕсене пĕр шеллемесĕр çĕмĕрсе пырăр. Пирĕн социализмлă тăван çĕршывăн чыслăхĕшĕн, орденлă Чăваш республикин чыслăхĕшĕн малашне те геройла кĕрешĕр.

ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔ,
ЧĂВАШ АССР СОВНАРКОМĔ,
ВКП(б) ОБКОМĔ.

Геройăн тăван ялĕнче

Колхозниксен митингĕ

ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ кăçалхи июлĕн 21-мĕшĕнчи Указпа авиаци капитанне Федот Никитич Орлова Совет Союз Геройĕн званине панă. Çак геройăн тăван ялĕнче— Советски районри Мăн Пакăш ялсоветĕнчи Кĕçĕн Ямашри «Большевик» колхозра августăн 26-мĕшĕнче митинг пулса иртрĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен сăмахĕсенче колхозра тăрăшса ĕçлесси, тырпула пĕр тăкаксăр тата хăвăрт пухса кĕртнипе Хĕрлĕ Çара пулăшасси çинчен, тăшмана аркатса тăкас вăхăта çывхартма пулăшса пырасси çинчен каларĕç.

Митингра пулнă колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен мухтавлă землякĕ патне çыру ячĕç, колхоз ĕçне лайăхлатас тата уборкăна хăвăртрах вĕçлес тĕлĕшпе практикăллă сĕнӳсем чылай пачĕç.

Кĕçĕн Ямашри „Большевик“ колхоз членĕсем Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. Орлов патне янă çыру

Пирĕн паттăр земляк, эпир, Санăн тăван колхозри колхозниксем, Санăн çапăçури хăюллă та паттăр ĕçӳсемпе савăнатпăр тата нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç малалла та геройла кĕрешсе пыма çирĕп сывлăх сунатпăр.

Эпир пурте, пĕр çын пек пулса, отечественнăй вăрçă кунĕсенче мĕнпур вăя çĕнтерӳ тума парас кăмăлсемпе ĕçлетпĕр. Пирĕн ĕçри патриотизм калама çук пысăк. Тылри боецсем пулса, эпир тăшмана тĕппипех аркатса тăкас вăхăта çывхартассишĕн тăрăшатпăр.

Тăшманăн вăйне хавшатма кирлине эпир пĕр минутăлăха та манмастпăр. Тăшман пирĕн колхоз стройне, пуянлăх паракан строя пĕтересшĕн, — пире ĕмĕрлĕхех нимĕç баронĕсемпе князĕсен чурисем туса хурасшăн. Анчах ку вăл пулас çук!

Хăюллă земляк! Эпир уборкăра вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек ĕçлетпĕр. Ыраша 13 кунта вырса пĕтерес вырăнне 9 кунта вырса пĕтертĕмĕр. Кăçал тырăсен тухăçлăхĕ пысăк. Кĕртыррисем те, çуртыррисем те пĕр гектартан 15 центнертан кая мар тухаççĕ.

Колхозниксем халĕ татах та ĕçченленчĕç. Кĕлте кĕртес тата авăн çапас ĕçсене вăхăтра туса ирттерме шутлатпăр. Кĕрхи тырăсене планран ирттерсе 30 гектар акса хăваратпăр. Кунпа пĕрлех государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçа кĕртме кирлине те манмастпăр. Колхозшăн тата хамăршăн памалли обязательствăсене халех пурнăçлама сăмах паратпăр. Халĕ эпир кăçалхи çулшăн аш-какай тата ытти обязательствăсене парса татнă.

Пирĕн земляк, Эсĕ тăшмана малашне те пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пыр. Ирĕк сывлăшра вĕçсе пирĕн халăхран мăшкăллама ан пар ăна. Эпир кунта çĕнтерӳ валли пурне те тăватпăр. Çулпуç Сталин юлташ кăтартăвĕсене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пыратпăр. Пирĕн ĕмĕтсем — умри черетлĕ ĕçсене вăхăтра пурнăçласси, тăван çĕршывăн вăй-хăватне ӳстересси.

Сана Ленин орденĕ тата «Красная Звезда» медаль парса, Совет Союз Геройĕн званине пани çинчен пĕлтернĕ хыпар пире малалла татах та çитĕнӳсем тума хавхалантарать.

Çапла ĕнтĕ, эпир этемлĕхĕн усал тăшманне— Германи фашизмне пĕтерсе тăкас шухăш-кăмăлпа ĕçлетпĕр.

Салам Сана, пирĕн мухтавлă земляк!

Колхоз председателĕ Г. ИВАНОВ,
Колхоз счетоводĕ З. СИДОРОВ,
Колхозниксем: В. ОРЛОВА, Н. КУРАЛЕВА, А. ГРИГОРЬЕВА, М. МАЛЬКОВ, Н. КРЮКОВА, ГЕРАСИМОВА, УСТИНОВ, С. ЯКОВЛЕВ, А. МОКЕЕВ тата ыттисем те.

Августăн 27-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн самолетсем Берлин, Данциг, Кенигсберг тата Хĕвелтухăç, Çурçĕр-Хĕвелтухăçĕпе Вăтаçĕр Германин ытти хулисенчи çарпа промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă

Августăн 27-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн самолетсен группи çанталăкăн йывăр условийĕсенче Берлин, Данциг, Кенигсберг тата Хĕвелтухăç, Çурçĕр-Хĕвелтухăçĕпе Вăтаçĕр Германин ытти хулисенчи çарпа промышленность объекчĕсем çине вĕçсе кайса бомбăсем пăрахнă.

Бомбăсем пăрахнине пула Берлинра—9 пушар, Данцигра—9 пушар, Кенигсбергра—10 пушар тухнă. Пушарсемпе пĕрле взрывсем пулнă.

Германин ытти хулисенче (Штеттинра, Штаргартра, Трептовра, Фюрстенвальдере, Тильзитра, Штольпра, Шнейдемюльре) вăйлă пушарсемпе взрывсем пулнине палăртнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 26-мĕшĕнчи касхи пĕлтерӳ

Августăн 26-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетскаяран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра, **Сталинградран** çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, çавăн пекех тата **Прохладный, Моздок** районĕнче тата **Краснодартан** кăнтăртарахра çапăçнă.

Пирĕн войскăсем Хĕвеланăç фрончĕпе Калинин фронтĕнче ăнăçлă наступлени туса пынине пула халăх пурăнакан 610 пункта, вăл шутра **Зубцов, Карманово, Погорелое-Городище** хулисене ирĕке кăларнă.

* * *

Августăн 25-мĕшĕнче пирĕн авиаци чăсĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 35 танкне, войскăсемпе груз-сем турттарса пыракан 300 автомашинине ытла, горючи тултарнă 24 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 12 батарейине шусарса пăрнă, боеприпассен склачĕсене тата горючин 2 складне сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи 3 состава çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине 2 батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Клетская районĕнче пирĕн войскăсем активлăн çапăçнă, уйрăм участоксенче противника каялла чакарнă. Нимĕçсен 6 орудине, 2 танкне, 8 пулеметне тата гитлеровецсен пехотине 2 ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехри районра вăйлă çапăçусем пынă. Противник унта, танксемпе пехотăн пысăк вăйĕсене пухса тăратса тата авиаци хӳтĕлесе пынипе, пирĕн позицисене пĕр чарăнмасăр атакăлать. Пирĕн войскăсем гитлеровецсен атакисене сире-сире яраççĕ, çав вăхăтрах тата вĕсем нимĕçсен фашистла войскисене пыра-пыра çапаççĕ. Н-ски стрелковăй часть пĕр кун хушшинче умлă-хыçлă туса пынă 5 атакăна сирсе янă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен çĕршер вилли выртса юлнă. Противникăн 11 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Юнашарти участокра артиллери батарейисем танксен колоннин çулне пӳлсе лартнă та нимĕçсен 14 танкне пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсем пирĕн артиллеристсенчен пăрăнса иртсе каясшăн пулнă, анчах та противотанковăй пăшалсен çулăмĕ вăйне пулнă, вĕсен татах 4 танкĕ пĕтнĕ. Н-ски танковăй часть темиçе сехет хушши пынă çапăçура нимĕçсен 13 танкне тата 500 гитлеровецран кая мар пĕтерсе тăкнă.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç çапăçнă. Пĕр участокра пĕр кун хушшинче нимĕçсен 62 танкне персе çĕмĕрнĕ. Совет чăсĕсем тăшман вăйлă хĕснине тытса чарса тăраççĕ, хирĕç пыра-пыра çапса ăна халран яраççĕ. Халăх пурăнакан С. пунктĕ патĕнчи çапăçусенче пехотинецсемпе танкистсем нимĕçсен пехотин пĕр батальонне аркатса тăкнă, 3 оруди, 17 пулемет, 5 миномет тата боеприпассем нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра пулеметчиксем румын салтакĕсен икĕ ротине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Краснодартан кăнтăртарахри районра пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотине хирĕç хаяррăн çапăçнă. Пирĕн тинĕс пехотин чăсĕсем юлашки вăхăтра румынсен 5-мĕш утлă дивизине аркатса тăкнă, çав дивизи хăйĕн салтакĕсен çуррине ытла çухатнă.

Прохладный районĕнче пирĕн чăсем противникăн пыв урлă каçнă ушкăнне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче вырăнти çапăçусем пулса пынă. Пĕр участокра, хăйĕн çухатнă позицийĕсене каялла туртса илес тесе, противник çаплах атакăсем тунă. Нимĕçсен пехотине танксем пулăшса пынă. Старши лейтенант Лозинскин батарейи нимĕçсен 2 танкне пĕтерсе тăкнă ыттисем вара каялла çаврăнса кайнă. Тепĕр участокра Борщов командирăн подразделенийĕ çапăçса ăнăçлăн разведка тунă. Нимĕçсен захватчикĕсемпе хаяррăн тытăçса, пирĕн боецсем 100 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Витебск облаçĕнчи партизансен Г. юлташ ертсе пыракан отрячĕ нимĕçсен гарнизонне пырса тапăннă, 17 автомашина пĕтерсе тăкнă, радиостанцие сирпĕнтерсе янă тата нимĕç оккупанчĕсене 40 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Партизансем станковăй пулемет, 2 миномет (минăсемпе пĕрле) тата 30 винтовка тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 5-мĕш эскадрин 3-мĕш группинчи летчик—унтер-офицер Вернер Шумахер, Хĕрлĕ Çар енне вĕçсе каçнăскер, çапла каласа панă: «Нимĕç летчикĕсем нумайĕшĕ Германи командованийĕн официальнăй пĕлтерĕвĕсене ĕненми пулчĕç. Çав пĕлтерӳсем суйрах та суярах пулса пыраççĕ. Нимĕç авиацийĕ вырăссен 2 самолетне персе ӳкерсен, пĕлтерӳре 20 тесе çыраççĕ. Çавăн пек туни нумай пулнă. Эпир Мурманск районĕнчи сывлăшри çапăçусенче, темиçе хут та пулнă, эпир лайăх пĕлетпĕр: пирĕн çухатусем, ялан тенĕ пекех, вырăссен çухатăвĕсенчен ытларах пулса пынă. Анчах та Германи командованийĕ вырăссен çухатăвĕсене яланах ӳстерсе пынă, нимĕç авиацийĕн çухатăвĕсене темиçе хут чакарса пынă».

* * *

Германире ютçĕршывсенчен килнĕ рабочисен пурнăçĕ куллен начарланса, йывăрланса пырать. Германирен тарнă çынсем пурте çапла калаççĕ: ютçĕршывсенчен пынă рабочисене пурăнма унта каторгăринчен те йывăртарах. Ютçĕршыв рабочийĕ вăл — чи правасăр ялала. Ăна пурте васкатаççĕ, унтан кулаççĕ. Çĕршер пин ют çĕршыв рабочийĕсем нимĕçсен заводĕсенче талăкра 15-шер сехет тата ытларах та ĕçлеççĕ, ĕçленĕшĕн укçа нимĕн чухлĕ те илмеççĕ. Эсэсенри машинăсем тăвакан заводра ют çĕршывсен рабочийĕсене çапла каласа ăнлантарнă: эсир ĕçлесе тăвакан ĕçукçи пĕтĕмпех завод лавкинчен илекен паекшăн тӳлеме юлать, тенĕ. Çав паек вăл — 200 грамм çăкăр та пĕр литр шĕвĕ шӳрпе. Августăн 1-мĕшпе 10-мĕш хушшинче эсэсовецсем çав заводра саботаж тунăшăн 7 поляка, 3 француза персе вĕлернĕ, хăйсен тăван çĕршывне тарма хăтланнă 30 голландеца концентрациллĕ лагере янă.

Августăн 27-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Августăн 27-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç Хĕвеланăç тата Калинин фрончĕсенче, **Клетская** районĕнче, **Сталинградран** çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, çавăн пекех тата **Прохладный, Моздок** районĕсенче тата **Краснодартан** кăнтăртарахра çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски соединени вăйлăн çапăçнă хыççăн противникăн çирĕплетнĕ рубежне йышăнса илнĕ. Нимĕçсенчен 30 оруди, 42 пулемет, 12 миномет, 2 бронемашина, 500 винтовка тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн темиçе çĕр вилли выртса юлнă. Тепĕр участокра пирĕн боецсем нимĕçсен 3 йывăр танкне тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ. Совет летчикĕсем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 5 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехри районра пирĕн войскăсем противникăн пысăк вăйĕсене хирĕç çапăçнă. Пĕр участокра нимĕçсем артиллерирен персе тата сывлăшран бомбăсем пăрахса тănă хыççăн атакăна танксен чылай йышлă ушкăнне кĕртсе янă. Пирĕн артиллеристсем, усă позицисенчен персе, тăшманăн машинисене çĕмĕрсе пынă, нимĕçсен 18 танкне стройран кăларнă. Противникăн темиçе танкĕ пирĕн оборонăна шала кĕрсе кайма пултарнă, анчах та вĕсене унта гранатăсемпе тата çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсемпе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра противникăн танкĕсемпе пехоти малалла кайма хăтланнă, анчах та вĕсене пирĕн артиллерин вăйлă вут-çулăмĕ каялла сирсе янă. Пирĕн утлă пĕр часть противникăн тылне кĕрсе кайнă та унта нимĕçсене чылай пысăк сиен кӳнĕ.

* * *

Краснодартан кăнтăртарахри районра вăйлă çапăçусем пынă. Н-ски соединенин участокĕнче нимĕçсем меллĕ высотана йышăнса илме хăтланнă. Пирĕн артиллеристсем, вăйлăн персе тăрса, гитлеровецсен çапăçу йĕркисене арпаштарса янă. Унтан пирĕн боецсем контратака тунă та, штык вĕççĕн тăрса çапăçса, противникăн 100 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

Прохладный районĕнче шыв урлă каçмалли каçăсемшĕн хаяр çапăçусем пынă. Сывлăшран персе тата пирĕн йывăр миномечĕсем нимĕçсен икĕ каççине çĕмĕрнĕ, противникăн пĕр çĕре пухăнса тăнă танкĕсемпе автомашинисене сапаласа янă.

Моздок районĕнче пирĕн чăсем противникăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç оборонăллă çапăçусем туса пынă.

* * *

Брянск облаçĕнчи партизансен О. юлташ ертсе пыракан группи противникăн танксемпе автомашинăсем тиенĕ 40 платформăллă поездне ӳпĕнтерсе янă.

* * *

Орел облаçĕнчи партизансем венгерецсен 47-мĕш королевски Гонведски полкĕн штабĕ панă приказа тытса илнĕ. Çав приказăн 4-мĕш пунктĕнче Марановка ялĕнче партизансем пĕр полковника тата офицера вĕлерни çинчен каланă. Унтан приказра çапла каланă: «Виççĕмĕш батальонăн иккĕмĕш ротинчи салтаксене, вырăссен тыткăна лекнĕ çыннисене хуралласа пынăскерсене, партизансем тапăннă. Партизансем хурала вĕлерсе пĕтернĕ те хĕçпăшалсене тытса илнĕ, тыткăнри çынсене ирĕке кăларнă, вара тарса пытаннă.

* * *

Нимĕçсен 112-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 256-мĕш полкран тыткăна лекнĕ салтак Яков Клеменс çапла каласа панă: «Нимĕç çарĕ хăй тытса илнĕ районсенче калама çук хытă тустарать. Оккупациленĕ территорире пур çĕрте те выçăпа аптăранă вырăс çыннисем сулланса çӳреççĕ. Орел хулинче çынсем выçăпа аптăраса вилеççĕ. Новоникольское ялĕнче эпир çар ĕçне вĕрентĕмĕр. Эпир апат начарри пирки ӳпкелешсен, офицерсем пире çапла калатчĕç: «Эсир кунта полнăй хуçа, кирек те хăш çурта кĕрĕр те хăвăра мĕн кирлине пурне те илĕр» тетчĕç. Офицерсем пире нимĕç салтакĕ кирек хăш вырăса та, арçынне-хĕрарăмне пăхмасăр, персе пăрахма пултарани çинчен темиçе хут та каланă. Персе пăрахас тесен çав вырăса партизан, партизанка е партизансене пулăшакан тесе çеç ят памалла. Çав сăлтавпа çĕршер вырăс çыннине персе пăрахнă».

* * *

Францири нумай хуласенче Германие хирĕçле демонстрацисем пулса иртнĕ. Бовере, Руанра тата Валенсинре çĕршер хĕрарăм урама тухнă та французсен тыткăна лекнĕ çыннисене халех хăйсен тăван çĕршывне яма ыйтнă. Секлэнре хĕрарăмсен демонстрацийĕ эсэсовецсемпе тытăçса илнипе вĕçленнĕ. Парижра студентсен митингĕ пулнă. Çав митингра студентсем интеллигенцие Франции нимĕç оккупанчĕсенчен çăлассишĕн кĕрешме чĕннĕ.

Тырпула вăрăсенчен, тăшман агенчĕсенчен, пушарсенчен лайăх сыхласа усрар!

ТЫРĂСЕМ АВАН ШĂТРĔÇ

ШĂХАСАН, августăн 26-мĕш. **(Хамăр корр).** Ямпахри «Майăн 1-мĕш» колхоз районра ытти колхозсенчен чи малтан, августăн 21-мĕшĕнче пур тĕрлĕ çуртыррисене те вырса пуçтарса кĕртрĕ. Кĕрхи тырă кĕлтисене пĕтĕмĕшпех кӳрсе капана хывнă, 10 гектар çинчи тырпула çапса амбара кĕртнĕ. Халь колхозниксем çуртырри кĕлтисене капана хываççĕ.

Колхознисем пур ĕçе те пĕр вăхăтра туса пынине пула, колхоз кĕрхи ака планне те августăн 23-мĕш тĕлне 100 процентчĕпех тултарчĕ, пĕтĕмпе 60 гектар тырă акнă, вăл шутран 8 гектарне планран ирттерсе акса хăварнă. Кĕрхи тырăсем аван шăтса тухрĕç.

Колхозра кĕрхи çĕртме тăвас, çĕрулми кăларас, авăн çапас ĕçсем хĕрӳллĕн пуçланчĕç. Августăн 25-мĕшĕнче колхозниксем 1,5 гектар çинчен çĕрулми кăларчĕç, 3 гектар кĕрхи çĕртме сухи турĕç.

Колхоз государствăна тырпул парас обязательствăсене пурнăçланипе пĕрлех, Хĕрлĕ Çар фондне 19 центнер тырă пачĕ.

Уйхир ĕçĕсене колхоз председателĕ П. Александров хăй те активлăн хутшăнса ĕçлерĕ. Кулленех машинăпа 4 гектар тырă вырас вырăнне 6-шар гектар вырчĕ, колхозниксене ĕçре яланах тивĕçлĕ пулăшу тата опыт парса пычĕ. Колхозниксем унăн опычĕпе усă курса хăйсен нормисене 150-шар процент тултарса ĕçлерĕç. Сеялщиксем М. Петрова, М. Герасимова куллен 5—5,5 гектар тырă акса нормăна 125—130 процент тултарса ĕçлерĕç, халĕ вĕсем авăн çапнă çĕрте те паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

С. ШАДИН.

ĔÇ ПЫСĂК ĂНĂÇЛĂХПА ПУЛСА ПЫРАТЬ

ИШЛЕЙ. **Мамăш ялсоветĕнчи «17-й партсъезд» тата** Буденный ячĕпе тăракан колхозсем кĕр тыррисемпе çуртыррисем вырас, кĕрхи тырăсем акас ĕçсене августăн 24-мĕшĕнче вĕçлерĕç. Колхозниксем халĕ кĕлте кӳреççĕ, авăн çапаççĕ, государствăна тырă параççĕ.

Çак çĕнтерĕве эпир мĕнле майпа турăмăр-ха? Ялсоветĕнчи колхозсем тырпулсене пухса кĕртме тимлĕн хатĕрленсе тухрĕç. Вĕсем уборка машинисене, çурласемпе çавасене çураки хыççăнах юсаса хучĕç. Уборкăри ĕç планĕсене тĕплĕн шутласа турĕç. Тырпулсене пухса кĕртес хĕрӳ ĕçсем пуçланичченех кашни колхозник хăй мĕнле ĕçре пулассине пĕлсе тăчĕ.

Буденный ячĕпе тăракан колхоз (колхоз председателĕ коммунист В. Гуськов юлташ) çуртрисене планпа йышăннинчен икĕ кун маларах вырса пуçтарчĕ.

Уборка ĕçĕсене ăнăçлăн туса пыма машинăсемпе, кĕреплеллĕ çавасемпе анлăн усă курни чылай пулăшрĕ. Буденный ячĕпе тăракан колхозра кĕреплеллĕ çавасемпе кулленех 20 çын ĕçлерĕ. Вĕсенчен А. Васильева, П. Смирнова юлташсем нормăпа 0,33 гектар вырас вырăнне 0,45—0,50 гектар вырса, кĕлтесене те хăйсемех çыхса пычĕç. Колхозница Ольга Малютина çурлапа 300 кĕлте вырас вырăнне 650 кĕлте вырса пычĕ.

«Коммунист» колхоз тырра машинăсемпе ытларах вырчĕ. Машиноведсем—эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ Иван Цыпруçпа унăн 14 çулти ывăлĕ пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç. Вĕсем нормăпа сменăра 5-шер гектар вырас вырăнне, 6,5-шер гектар вырса пычĕç. Çак колхозра çавапа тырă çулакансем—эвакуаци йĕркипе илнĕ А. Батаревский, И. Ивуль, А. Шкингс юлташсем кулленех çуршар гектар çулса пычĕç. Вĕсем çавапа çулнă чухне пĕр пучах та тăкмарĕç, ĕçе типтерлĕ турĕç.

Ялсоветри колхозсем кĕракине те тĕплĕн хатĕрленсе тухрĕç, çавна пула кĕрхи тырăсене акас ĕçе партипе правительство кăтартса панă срокран малтан—августăн 24-мĕшĕнче вĕçлерĕç. «Буденный», «Коммунист» колхозсем планран ирттерсе 2-шер гектар тырă акса хăварчĕç.

В. Гуськов, К. Федоров, Н. Пугачев юлташсем уборка вăхăтĕнче агитациллĕ-массăллă ĕçе йĕркеллĕн туса пычĕç. Вĕсем колхозниксем каннă вăхăтсенче Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, вăрçă эпизочĕсене вуласа пачĕç, хăйсен витĕмлĕ сăмахĕсемпе колхозниксене ĕçре çитĕнӳсем тума çĕклерĕç.

П. РЫКОВ,
Мамăш ялсовет исполкомĕн председателĕ.

Жнейкăпа 110 гектар вырнă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. **(Телефонпа).** Машинно-тракторнăй станцинчи машиновед Иванов юлташ Медикасси ялсоветĕнчи колхозсенче ĕçлет. Вăл МТС жнейкипе сезонра 80 гектар вырас вырăнне августăн 26-мĕш тĕлне 110 гектар вырса, плана 140 процент тултарчĕ. Унăн ĕç пахалăхĕ те лайăх.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

Тракторсемпе ĕçлемелли плана тултарнă

ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссарне МАЛОВ юлташа, Политсектор начальникне ЧЕРНОВ юлташа

Августăн 25-мĕшне тракторсемпе ĕçлемелли плана, авăн çапассисĕр пуçне, пурнăçа кĕртрĕмĕр. 19.399 гектар вырăнне 19.551 гектар ĕçлерĕмĕр. 13 бригадăран 9 бригада плана ирттерсе тултарчĕç.

Шăхасан МТС директорне КОНСТАНТИНОВА, Политотдел начальникне ИЖУТОВА

Сире тата МТС-ăн пĕтĕм коллективне çав тери чаплă çĕнтерӳ тунипе—тракторпа ĕçлемелли ĕçсен планне срокчен тултарнипе саламлатпăр. Малалли ĕçре тракторăн пĕтĕм вăйĕпе усă курма тăрăшăр тата плана ирттерсе тултарса Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулăр, тесе шанса тăратпăр.

ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ МАЛОВ.
Политсектор начальникĕ ЧЕРНОВ.

Эвакуациленĕ çынсем хĕрӳллĕ ĕçре

ШАМАРША. «Победа» колхоз эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ Геня Трейвус çемьи уйхирте хастарлăн ĕçлет. Трейвус юлташ, ватă пулин те, кăçал 50 ĕçкунĕ турĕ. Эвакуаци йĕркипе килнĕ ытти çынсем те колхозра çине тăрса ĕçлеççĕ.

Колхоз правленийĕ çак кунсенче вĕсем валли 10 кĕпе, 7 йĕм тата урана тăхăнмалли ată-пушмаксем илсе пачĕ.

ВАСАН МИШШИ.

Полководец Суворов

(К. Осипов. „Суворов". Госполитиздат, 1942 çул)

Госполитиздат К. Осиповăн вырăссен гениллĕ полководецĕ Александр Васильевич Суворов çинчен çырнă лайăх кĕнекине кăларчĕ. Çав кĕнеке вăрçăн çавтери пысăк мастерĕн, вырăссен çар искусствине пуçарса яраханĕн образне тĕрĕс кăтартса парать.

К. Осиповăн «Суворов» ятлă кĕнекине Хĕрлĕ Çарăн кашни командирĕн, вăтаммине аслăрахăн те, çавăн пекех чи аслисен те вуласа тухмалла. Вуласа тухни çеç мар, Суворов генийĕн тупсăмне тĕплĕн ăнланса илмелле, унăн çапăçăва организацилемелли меслетне вĕренмелле, унăн çĕнтерӳ тумалли искусствине ăнкарса илмелле.

Кĕнекене тĕрĕ те сăнлăхлă чĕлхепе çырнă. Вăл вулакана малтанхи страницăсенчен пуçласах интереслентерме тытăнать. Суворовăн çемьери тата йăлари пурнăçĕ çинчен калакан материалсене кăна ытлашшиех тĕплĕн çырса кайнă. Кĕнекене вулакан çар çыннине К. Осиповăн кĕнекинче Суворов çинчен калакан биографиллĕ даннăйсен çав енĕ мар интереслентерет. Суворов пирĕншĕн чаплă полководец, патриот, вырăссен XVIII-мĕш ĕмĕрĕн çуррипчи войскисене вĕрентекенĕ тата воспитани параканĕ, вĕсен «паттăр автокритечĕ» (Энгельс) пулса тăнипе хаклă.

К. Осиповăн Суворов çинчен çырнă кĕнекипе паллашса, Хĕрлĕ Çарăн командирĕ вăрçăн çав аслă мастерĕнчен нимĕç захватчикĕсене, пирĕн çĕр çине тапăнса кĕнĕскерсене, çĕнтермешкĕн [illegible] тивĕçлĕ.

Суворов — çар искусствин пĕтĕм тĕнчери историйĕнче тĕлĕнмелле çавтери пысăк вырăн йышăнса тăрать. Суворов — вăл поражени мĕн иккенне пĕлмен полководец. Вăл хăй мĕн чухлĕ çапăçнă, çавăн чухлĕ çĕнтерӳ тунă.

Суворов — вăл аслă полководец кăна мар, вăл — вăрçă ĕçĕнчи революционер. Вăл вăрçă ĕçне çавтери лайăх пĕлсе тăракан тата вăрçă практикин тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк опыт пухнă çын, умрине çавтери витĕмлĕн курса тăракан, пысăк вăй-хăватлă тата çулăмлă патриотизмпа çунса тăракан çын, — вăл «хăйĕн тăван çĕршыв чапĕшĕн ырă ятпа кĕрешекен тата хăйĕн ăнăçлăхĕсене пĕтĕмпех тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн тăвакан» полководец.

Суворовăн чапне ăмсанакансем унăн вăрçăри ăнăçлăхĕсене телейпе ăнлантарса панă. Çакна хирĕç ответлесе Суворов çапла каланă: «Паян телей, ыран телей, турă çырлахтăрах, хăш чухне тата ĕнтĕ пĕлни те пултăр».

Суворов тăшмана телейпе мар, пĕлнипе çĕнтернĕ. Вăл вăрçă ĕçне тĕплĕн вĕренсе çитнĕ тата вăрçă инструменчĕпе — хĕçпăшалпа вăйпа çавтери лайăх усă курнă. Унăн час-часах противникăннинчен вăйсем сахалтарах пулсан та, Суворов тăшмансене çĕнтернĕ. «Штыкпа мар, пĕлнипе çапăçасçĕ», — тесе кăтартса панă вăл.

Суворовăн пĕлĕвĕ вăл — самантлăх килсе кĕнĕ хавхаланăвăн çимĕçĕ мар, вăл — хăйĕн тата войскăсен пĕлĕвĕсемпе ăсталăхне хăпартассишĕн çавтери нумай вăй хурса ĕçленин результачĕ. Хăй пысăк талантлă пулнине пăхмасăрах, Суворов хăйĕн пурнăç тăршшĕнче кĕнекесем тăрăх, пурнăçран, çавăн пекех тата, кирлĕ пулсан, тăшмансенчен те вĕреннĕ Суворовăн генилĕхĕ вăл çĕнтерĕве организацилеме пĕлнинче пулса тăрать. Çĕнтерӳ тăвас тесен, вăрçă ĕçĕн культурине вĕренсе алла илмелле. **«Хăюллăхпа хавхалану тата паттăрлăх пур çĕрте те, пур чухне те кирлĕ,** — тенĕ Суворов,— **анчах вĕсем искусствăран тухса тăмасан, пачах та вырăнсăр».**

Противникран чеерех пулса ăна улталас, ăна çирĕппĕн те хăвăрттăн пырса çапса кăратса ӳкерес, ĕçе мĕн май килнĕ таран кĕтмен çĕртен туса хурас, — акă çаксене шыранă ĕнтĕ Суворов хăйĕн çĕнтерӳсем патне çитмелли çул-йĕрсене. Çавсене вăл пĕр пăрахланмасăр пурнăçа кĕртсе пынă та. «Тĕлĕнтермелле — çĕнтермелле», — тесе вĕрентнĕ Суворов. Противника кĕтмен çĕртен тата хăвăрттăн пырса çапнипе тĕлĕнтерме пулать.

«Хăвăрттăн та кĕтмен çĕртен пырса çапассине сахал йышпа та тума пулать»,—тесе çине тăрса вĕрентнĕ вăл. Çапла тунипе противник аркапса кайма, хăраса ӳкме, çухалса кайма пултарать. **«Кам хăраса ӳкнĕ, вăл çурри паранна»**, — тенĕ Суворов. Эпĕ тăшмана хăратса ӳкерме, ăна паникăна ӳкерме пултарăм пулсан, çакă вăл вара эпĕ тăшмана çурри çĕнтернине пĕлтерет, ан тив халлĕхе эпĕ тăшмана куçпа курман пултăр, вăл çапах та манăн вăйсене тĕрĕссипе пулнинчен йышлăрахха курма пуçлать, мĕншĕн тесен хăраса ӳкнĕ çыннăн куçĕ чарăлса каять, кунта вара тăшмана çĕнтерес тесен, манăн çапăçăва кĕресси кăна юлать, — тенĕ Суворов.

Салтак Суворов куçĕ умĕнче, Фридрих II шкулĕнчи нимĕçсем вĕрентнĕ пек — «артикулыпе пăхнă механизм» мар, чĕрĕ çын, хăйĕн начальникĕн маневрне ăнланма пултаракан çын пулса тăрать. «Салтак вĕрентнипе юрамасть пулса пытăр кăна». Салтак çĕнтерĕве «тăшманăн баталионĕсен варринче шырать», мĕншĕн тесен, вăл пĕлет: «кам малалла каять, ăна пĕр инкеклĕ пуля лекме пултарать, кам каялла чупать, ун хыççăн вунă пуля вăркăнать»; вăл сайра та тĕл перет; штыкпа витĕмлĕн тирет; çапăçура пуçне курать, анчах юлташне çăлать; ăна курать — тăшман хăрать; салтак—«чудо-богатырь».

Суворов çапла тума хушнă: войскăсем мирлĕ вăхăтра хăйсене вăрçăри пек туйса вĕренччĕр, хатĕрленччĕр, тенĕ. **«Вереннĕ чухне салтака йывăр пулсан, походра çăмăл пулать, вĕренӳре çăмăл пулсан — походра йывăр»,** —тенĕ вăл.

Çапăçăва ертсе пырасси Суворовăн противникпа тĕл пулнă самантран мар, чылай малтан хатĕрленнинчен, салтаксемпе офицерсене хирте вĕрентсе хăнăхтарнинчен, боевой задачăсене пурнăçа кĕртме войскăсене тĕрĕс те çирĕп пухса йĕркеленинчен пуçланать. Çав шутпа вăл войскăсене хăвăрттăн та инçете куçса çӳремешкĕн вĕрентме тăрăшнă. Суворов мĕнле хăвăртлăхпа куçса çӳренисем пуринтĕн те паллă пулса тăраççĕ.

Суворов хăйĕн войскисен пуçне пуçарулла та хăюллă тата çирĕп командирсене вĕрентсе хатĕрлесе лартнă. Противника поражени кӳме май паракан пуçарулăх, — акă мĕне вĕрентсе хатĕрленĕ Суворов хăйĕн командирĕсене.

Салтакпа офицерăн тăшманпа кĕрешнĕ çĕрте хăрама, паникăна ӳкме пĕлмелле мар, тесе вĕрентнĕ яланах Суворов.

«Противника хăвăрттăн пырса çапмалла... хăвăрттăн малалла куçмалла... хаяррăн атакăламалла...: хăвăрттăн хăваламалла тата çирĕп пулмалла», — çапла пулма вĕрентнĕ Суворов çапăçура.

Çакăн пек шухăш-кăмăлпа вĕрентсе хатĕрленĕ войскăсем çĕнтерессине вăл шанса тăнă. Вăл хăюллăн çапла каланă: «Кам мана хирĕç — вăл вилĕ», тенĕ.

Кучухнехи вăрçа ертсе пырас техника, çапăçăва организацилемелли формăсемпе меслетсем войскăсен хĕçпăшалĕ тата ыттисем те халĕ ĕнтĕ Суворов чухнехи мар, анчах çĕнтерӳ тумалли принципсем халĕ те Суворов чухнехипе пĕрех. Противника пĕлни, унăн вăйсăр енĕсемпе вăйлă енĕсене пĕлни, вăрçă ĕçĕнчи çĕнĕ çитĕнӳсене шута илсе пыни, войскăсене хирте вĕрентсе хатĕрлени, вырăна лайăх пĕлни, обстановкăна ăнланса илни,—çаксем вĕсем халĕ те 150 çул каярахри пекех питех те кирлĕ пулса тăраççĕ.

Çĕнтерӳ тумалли татăклă май тесе Суворов территори тытса илнине мар, **тăшманăн чĕрĕ вăйне пĕтерсе тăкнине, унăн войскисене пĕтерсе тăкнине шутланă.** Çак тĕлĕшрен вăл хăй вăхăтĕнчи Европăри вăрçă ĕçĕнчи авторитетсем хушшинче уйрăмах паларса тăнă.

Суворов çар службине рядовой салтакран пуçласа вырăс çарĕн генералиссимусĕ патне çитиччен вĕренсе тухни паха тĕслĕх парать. Суворов унчухнехи вырăс çарĕн мĕнпур чинĕсенче пĕрин хыççăн теприне пулса ӳссе пынă, хăй вăхăтĕнчи çар службин мĕнпур обязанноçĕсемпе требованийĕсене тĕплĕн вĕреннĕ. Çакă вара ăна çар пурнăçĕн мĕнпур енĕсене тĕплĕн ăнланса илме пулăшнă, хăй умне тухса тăнă задачăсене кирек мĕнле условисенче те татса памашкăн майсем тупма пулăшнă.

Çичĕ çул хушши пынă вăрçă (1756—1763 ç. ç.) Суворовшăн кĕрешӳри пысăк шкул пулнă. Çав çулсенче вăл вăрçăра тĕп ĕç мĕн пулса тăнине ăнланса илнĕ. Суворов çапла шутланă: вăрçăри тĕп ĕç — противникăн чĕрĕ вăйĕсене вĕлерсе пĕтересси пулса тăрать, мирлĕ вăхăтра войскăсене вĕсен вăрçăра мĕн тумаллине кăна вĕрентмелле, вĕсен çапăçура хăйсене мĕнле тытмаллине кăна вĕрентмелле, тенĕ.

Çичĕ çул хушши пынă вăрçăран илнĕ опытăн тата чаçсене командир пулса ертсе пырас практикăн результачĕ — Суворовăн «Çĕнтермелли наука» текен чаплă кĕнеки пулса тăнă. Çак кĕнекене салтака вăрçă çинчен тĕрĕс те лайăх аса илсе юлмалла, кĕскен те уçăмлăн вĕрентсе каланисене, салтакăн обязанноçĕсем çинчен, унăн тăван çĕршыв умĕнчи пысăк тивĕçĕ çинчен тата тăшмана çĕнтермелли искусство çинчен вĕрентсе каланисене кĕртнĕ.

«Çĕнтермелли наука» — вăл противника çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешӳре ăс памалли руководство; çакă вăл — полководецăн шухăшĕсемпе хăватне пĕтĕçтерсе пĕрлештерни; çакă вăл — боеца паттăр та чаплă ĕçсем тума хавхалантаракан кĕске те ĕнентермелле лозунг; войскăсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе Европăра тунă чи паха çитĕнӳсене пĕтĕçтерсе çырни пулса тăрать.

Çар искусствинче Суворов шаблонлă çулйĕрсене йышăнман. Шаблон уншăн пулман. Вăл туса ирттернĕ кашни çапăçу — обстановкăна шута илсе, задачăна пачах та çĕнĕлле татса панипе ирттернĕ хăйне евĕрлĕ ĕç...

1789 çулта Рымник юханшывĕ çинче Суворов унчухнехи вăхăтра питех те сложнăй пулса тăракан маневр туса ирттерет — противникăн вăйĕсене сахалтарах вăйсемпех фронтра тытса тăраттарса, ăна йышлăрах вăйсемпе флангран пырса çапать.

Çав çулах Столовичи патĕнче Суворов, тăватă хут сахалтарах вăйсемпех противника, хăй калана тăрăх, «çурăмран» пырса тапăнать те тăшманăн отрядне сапаласа ярать. Хирĕç тăнисене пурне те Суворов «касса-вакласа тата таптаса пĕтернĕ». 1773 çулти май уйăхĕнче (вырăссемпе туроксем хушшинчи вăрçăра) Суворов, пуçарулăха хăй аллине илсе, çĕрлехи атакăра туроксен çирĕпленĕ Туртукай ятлă пунктне тытса илет. Çав ĕçе тума вăл хăйĕн отрядне Дунай шывĕ урлă каçарать.

Ланцкоронă патĕнче 1771-мĕш çулта (поляксене хирĕç) пулса иртнĕ çапăçура Суворов, тăшманăн окопсене кĕрсе вырнаçнă пехотине утлă çарпа атакăлать, çакăн хыççăн вара пехота тăшмана штык вĕççĕн тăрса пырса çапать. Суворов тăшмана пĕтĕмĕшпех çĕнтерет. Çавăн пек майпа кĕрешесси вăрçă практикинче вăл вăхăтчен пачах та пулман.

Суворов çинчен çырнă кĕнекине вулакан командирсем Суворов хăй умне тухса тăнă задачăна кашни уйрăм самантра уйрăммăн татса панине тĕплĕн вĕренме тивĕçлĕ.

1790 çулта вăл вăхăтра никам çĕнтерсе илейми текен Измаил крепоçне питех те ăстан тытса илет. Унччен малтан Измаил евĕрлĕ туса хатĕрленĕ укрепленисем çинче Суворов хăйĕн войскисене штурм ĕçне вĕренетет; войскăсем хатĕрленсе çитсен суя демонстрацисем туса противника улталать, унтан вара çав демонстрацисемпе противникăн сыхăлăхне лăплантарнине кура, крепоçа хăвăрттăн штурмласа тытса илет.

Италири кампанире, Наполеонăн вăл вăхăтри чаплă войскисемпе тĕл пулса, Суворов войскăсене çĕнĕлле йĕркепе — колоннăсемпе çапăçăва кĕртмелли майсемпе усă курать. «Вĕсем колоннăсемпе тăрса çапăçаççĕ,—тет вăл хăйĕн войскисене французсем çинчен ăнлантарса парса,—эпир те вĕсене колоннăсемпе пыра-пыра çапăпăр». Чăн та вара вĕсем тăшмана Треббии юханшывĕ çинче, Нови патĕнче тата Чертов мост патĕнче, Швейцари урлă каçнă чухне, хаяррăн та пысăк ăнăçлăхпа çапаççĕ.

Суворов Швейцари урлă каçни — полководец çулĕ çинче нихăçан пулман йывăрлăхсене çĕнтерсе каçма пултарнин, этем çавăн чухлĕ вăй хурса кĕрешме пултарнин чи çӳлĕ пусăмĕ пулса тăрать. Хура вĕркуне, сăрт-тусен тăррисем çине юр купаланма тытăннă чухне, лăпкă кунсем вырăнне асар-писер çил-тăмансем килсе тухсан, вырăссен çарĕ карттăсемсĕр, çул кăтартаканcемсĕр, продовольствипе обозсемсĕр, Италирен Альпăри Сен-Готард перевалĕ урлă Швейцарие каçса кайнă. Войскăсем ун пек каçнисем унччен нихăçан та пулман. Çул çинчи пур перевалсене те, çавăн пекех оборона тумалли пур лайăх вырăнсене те противник— французсен çарĕ йышăнса тăнă пулнă. Чертов мост текен кĕпере чи хăрушă вырăнта ишĕлтерсе антарнă пулнă. Вырăссем хăнăхман сăртсем урлă çавăн пек условисенче каçма май çук пек тата Швейцарие вырăссен унти войскисемпе пĕрлешмешкĕн тухма май çук пек туйăннă. Анчах та Суворовăн «чудо-богатырĕсем» сăрт-тусем урлă каçнă; вĕсем çул çинче пĕл пулнă çавтери пысăк йывăрлăхсене тӳссе ирттернĕ; противника сирсе пăрахса, хăйсем умне лартнă задачăна чыслăн пурнăçа кĕртнĕ. Çав çулпа тухма пултарасси пирки хăшпĕр чухне иккеленнĕ самантсем те пулнă, анчах суворовецсене хурçă пек çирĕп дисциплина вăй парса пынă, вĕсене çапăçури туслăх пĕтĕçтерсе пынă, Суворовпа пĕрле пурне те тума пултарассине çирĕппĕн шанса тăни вĕсене чăтăмлăх панă.

Суворов чăннипех вырăс çынни пулнă. Вăл нимĕçсен тата вырăс çарĕнче Фридрих II-ăн ĕçĕсене уйрăмах ухмахла пурнăçа кĕртсе пыраканĕ Павел I туса хума пăхакан нимĕç йĕркисен тăшманĕ пулнă. «Вырăссем пруссаксене яланах çапнă, — тенĕ Суворов, — вĕсенчен илмелли мĕнех пур вара». «Пруссаксенчен ытлăраххисем урăх никам та çук», — тенĕ вăл урăх ĕçсем пирки каланă чухне.

Пирĕн командирăн Суворовран вĕренмелле. Суворов пек пуласси — Хĕрлĕ Çар командирĕн чыслăхĕ кăна мар, унăн тивĕçлĕхĕ те пулса тăрать, мĕншĕн тесен Суворовăн çĕнтерӳ принципĕсем пирĕн вăхăтра та хăйсен вăйне çухатман.

К. Осиповăн «Суворов» ятлă кĕнеки, аслă полководец кĕрешĕвĕн тĕп положенийĕсемпе паллаштарса, Хĕрлĕ Çарăн çапăçури пултарулăхне çирĕплетсе мае парать, пирĕн командира культура тĕлĕшĕнчен ӳсме пулăшать, унăн çапăçури ăсталăхĕпе пĕлӳлĕхне хăпартать.

(«Правда», августăн 26-мĕш.).

Плана тултарас хавалпа

КАНАШ, августăн 27-мĕш. (Телефонпа). Заводăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ вагонсем юсакан цех иртнĕ уйăхри хăвăртлăха чакармасăр ĕçлет. Цех коллективĕ август уйăхĕнчи программăна тултарассишĕн кĕрешет. Гольдберг юлташ ертсе пыракан 4-мĕш номерлĕ комплекс паян августри ĕç планне тултарать. Уйăхри задание пуринчен малтан Чесов юлташăн Хĕрлĕ ялавлă бригади тултарчĕ. Комсомолецсемпе çамрăксен Степанов юлташ ертсе пыракан бригади те унтан юлмасть. Ку бригада хăйĕн заданине августăн 26-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ. Унăн членĕсем —Быкова, Семенова тата Киселев комсомолецсем питĕ тухăçлă ĕçлеççĕ. Степанов юлташăн бригади заводри комсомол комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме шанса ĕçлет.

Хĕрӳ ăмăртура утильцехри стахановецсен речĕ ӳссех пырать. Болтсем касакан работница М. Копысова юлташ иртнĕ уйăхсенче нормăна тултараймам, халĕ вăл 300 процент ытла тултарса ĕçлет. Çавăн пекех, çамрăк коммунистсем М. Крупенко, Т. Матузенко юлташсем кулленех 5-шер норма тултараççĕ.

И. ШЛАПАК,
Заводри партбюро секретарĕн заместителĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

КУКЕÇ, августăн 26-мĕш. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çар валли çĕнĕрен ăшă тумтирсем пухма тытăннăранпа Шупашкар районĕнче 461 тир, 15 мăшăр алшиш, 12 мăшăр çăм носки, 35 мулаххай, 10 кĕрĕк пиншак, 4 мăшăр çăматă, 25 мăшăр çăм тăла, 6 одеял, 8 мăшăр аялти кĕпе-йĕм пухнă. Ăшă тумтирсем пухас ĕç Чăкăр ялсоветĕнчи колхозсенче ăнăçлăн пулса пырать.

Çав вăхăтрах Çĕньял-Ойкас, Карачура, Шорка, Тулик-Хураски ялсовечĕсенчи колхозсенче ăшă тумтирсем пухас ĕç паянхи кунччен те тытăнман. Çак ялсовечĕсенче ăшă тумтирсем пухас енĕпе ĕçлекен комиссисен хăйсене тивĕçлĕ ĕçе халех тытăнмалла, кĕске вăхăт хушшинчех çак ĕçе анлăн сарма тăрăшмалла.

Е. ОЗИКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Халăх творчествине пухас ĕç

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче совет халăхĕн аслă çулпуçĕ Сталин юлташ çинчен, совет патриочĕсем вăрçăра паттăррăн çапăçни, совет çыннисем тылра тимлĕн ĕçлени çинчен халăх çĕнĕ юрăсем, частушкăсем, калавсем, юмахсем, халлапсем хывать. Вĕсенчен чи лайăххисене—вăрçăра пурнăçа шелленмесĕр çапăçма, тылра паттăррăн ĕçлеме хавхалантараканнисене —пухмалла, халăх хушшине сармалла.

Халăх творчествине пухас ĕçре культура çурчĕсем, шкулсем, клубсем, вулав çурчĕсем, хаçат кăларас тĕлĕшпе ĕçлекенсем пысăк усă пама пултараççĕ. Вĕсен вăрçă кунĕсенчех хывнă юрăсене, частушкăсене, халлапсене çырса пухас пулать.

Халăх творчествин Пĕтĕм Союзри Крупская ячĕпе тăракан çурчĕ Октябрьти революци 25 çул тултарнă тĕле «Великая отечественная война в устном творчестве советского народа» ятлă кĕнеке кăларма палăртнă. Çав кĕнекере чăваш халăхĕн творчестви те тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла. Çавăнпа та чăваш хушшинче çӳрекен халлапсене, çĕнĕ юрăсене, частушкăсене çырса, вĕсене Чăваш республикинчи Халăх творчествин çуртне çак адреспа ярса пама ыйтатпăр: Шупашкар, Герцен урамĕ, 9-мĕш номерлĕ çурт, Халăх творчествин çурчĕ

А. ОРЛОВ—ШУÇАМ.
ЧАССР Халăх творчестви çурчĕн директорĕ.

—⊙—

ВĔРЕНУ ÇУЛĔ ХĂÇАН ПУÇЛАНАТЬ

РСФСР-ĕнчи пуçламĕш, туллимар вăтам тата вĕтам шкулсенче вĕренӳ çулĕ пуçланмалли срoксене кăтартса панă. Кĕçĕн классенче — 1-мĕшĕнчен пуçласа 4-мĕш класс таран — сентябрь уйăхĕн 1-мĕш числинче вĕренме пуçлаççĕ, аслă классенче — 5-мĕшĕнчен пуçласа 10-мĕш класс таран—октябрь уйăхĕн 1-мĕш числинче вĕренме пуçлаççĕ.

Шкулсене вĕренме йышăнас ĕç август уйăхĕн 25-мĕш числинче вĕçленмелле. (ТАСС).

СУД

Светомаскировка правилисене пăхăнманшăн

Шупашкарта Водосвет урамĕнчи 14-мĕш çуртра пурăнакан М. П. Ильина светомаскировка правилисене темиçе хутчен те пăснă, ун çинчен асăрхаттарсан та вăл светомаскировка правилисене пăхăнман. Хулан 1-мĕш участокĕнчи халăх сучĕ М. П. Ильина гражданкăна çавăншăн виçĕ çул хушши хупса усрамалла тата икĕ çул хушши суйлав прави памалла мар тунă.

Ют çĕршывсенче

„Иккĕмĕш фронт—Гитлера çĕнтермелли чи лайăх метод пулса тăрать"

Англири митингсем

ЛОНДОН, августăн 26-мĕш. (ТАСС). Англире çаплах митингсем пулса пыраççĕ, çав митингсенчи çынсем, пĕр шухăшлă пулса, иккĕмĕш фронта часрах уçма ыйтакан резолюцисем йышăнаççĕ.

Халдингтонра йышăннă резолюцире, премьер-министр Черчилль патне янăскерте, çапла каланă: «Европăра иккĕмĕш фронта часрах уçни пирĕн хамăрăн вырăс союзникне çеç мар кирлĕ, вăл тата пирĕн хамăрăн çĕршывăн хăрушсăрлăхĕшĕн те тата фашизма çĕнтермешкĕн те кирлĕ. Пирĕн обязательство пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине лайăх пĕлсе тăрса, эпир правительствăна Европăра иккĕмĕш фронт уçас тĕлĕшпе тăвас ĕçсенче пуринче пулăшма сăмах паратпăр. Эпир континента ăнăçлăн пырса кĕмешкĕн кирлĕ пулма пултаракан кирек мĕнле жертва тума та хатĕрри çинчен каласа паратпăр».

Черчилль парламентра каласа пани

ЛОНДОН, августăн 26-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Черчилль августăн 25-мĕшĕнче парламентра Мускаври каласусем çинчен тата Каира кайса Хĕвеланăçĕнчи пушхирти фронтра пулни çинчен тата Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи ытти районсенче пулни çинчен каласа панă. Парламентăн пулас сессийĕнче Черчилль хăй ăçта кайса мĕн çинчен калаçни çинчен тĕплĕн каласа парать. Парламентăн сессийĕ уçă сесси пулать, Черчилль доклад тунă хыççăн пренисем пулаççĕ пулмалла.

ЧЕРЧИЛЛЬ КАИРТА ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИРЕ КАЛАНИ

ЛОНДОН, августăн 26-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 22-мĕшĕнче Каирта пулнă чухне Черчилль пресс-конференцире тухса каланă. Египетри çапăçу Англипе унăн союзникĕсем çĕнтернипе вĕçленĕ тесе шанса каланă хыççăн Черчилль çапла каланă: «Эпир Египетшăн тата Нил улăхĕшĕн çапăçма хатĕр тăратпăр, уншăн эпир çав территори Англин хăйĕн территорийĕ пулнă чухнехи пекех çапăçма хатĕр. Противника каялла чакармашкăн тата ăна малашне сиен кӳме пултараймалла мар туса чакармашкăн тинĕспе сывлăш тăрăх мĕн илсе пыма пур, çавсене илсе пырăпăр», тенĕ.

БРАЗИЛИ ВĂРÇА ХУТШĂННĂ МАЙ

ЖЕНЕВА, августăн 25-мĕш. (ТАСС). Бразилия Германипе Италие хирĕç вăрçă пуçласси çинчен пĕлтернĕ май Португали президенчĕ Кармона Бразили президентне Варгаса телеграмма янă. Çав телеграммăра вăл «Португали халăхĕ Бразили халăхне тăванла хисеплени» çинчен пĕлтерет. Португали правительстви Бразили правительствине çакăн пек калакан заявлени панă: «Бразилин вăрçа хутшăнмалла пулса тăнă вăхăтра Португали правительстви ăна хăй тăванла хисеплени çинчен тата унăн хăйĕн чыслăхĕпе прависене сыхламашкăн йышăннă позицийĕпе пĕр шухăшлă пулни çинчен пĕлтерет», тенĕ.

БРАЗИЛИ ÇЫРАНĔ ÇЫВĂХĔНЧЕ ТĔНĔЛ ДЕРЖАВИСЕН ВИÇĔ ПОДВОДНĂЙ ЛОДКИНЕ ПУТАРНĂ

ЛОНДОН, августăн 25-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: ĕнер Бразили çыранĕ патĕнче противникăн виçĕ подводнăй лодкине путарнă. Вĕсене Уругвай бомбардировщикĕсен эскадрильисем, Бразилипе Уругвай чикки çывăхĕнче хуралра çӳренĕскерсем, курнă

СОЛОМОН УТРАВĔСЕН РАЙОНĔНЧИ ВĂЙЛĂ ÇАПĂÇУ

ЛОНДОН, августăн 25-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс-çар министерстви çапла пĕлтерет: Лăпкă океанăн кăнтăрти пайĕнче Америкăн тинĕс-çар вăйĕсемпе сывлăш çар флочĕ Японин вăйĕсем вăйлăн кĕснине сирсе ярас тесе хытă çапăçаççĕ, Японин вăйĕсем вĕсем Соломон утравĕсен кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи ушкăнĕ патне çывăхарнă. Япония çапла вăйлăн тапăнни унăн Соломон утравĕсем çинчи хăшпĕр базисене, американецсем тытса илнĕскерсене, каялла туртса илес шутпа пулса пырать. Японин контратакине Америка вăйĕсем сире-сире яраççĕ.

Малташлăха пĕлтернĕ тăрăх, Японин наступлени тăвакан вăйĕсене Америкăн «Вĕçекен крепость» йышши самолечĕсем тата авианосецсем çинчи самолетсем атакăланă. Тăватă бомбардировщик Япони авианосецне атакăланă. Тăватă бомба тӳрĕ лекни çинчен пĕлтернĕ. Америкăн тинĕс çинчи авиацийĕн самолечĕсем Японин пысăках мар «Рюдзис» авианосецне атакăласа, ăна чылай пысăк сиен кӳнĕ. Японин хăшпĕр крейсерĕсемпе линкорĕсене те бомбăсем тӳрĕ лектерсе сиенленĕ.

ВАШИНГТОН, августăн 26-мĕш. (ТАСС). Тинĕс-çар министерстви çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă: хальхи вăхăтра Соломон утравĕсен районĕнче тинĕс çинче тата сывлăшра вăйлă çапăçу пырать. Америка авиацийĕ ăнăçлăн кĕрешнине пула бомбăсем сахалтан та Японин 6 карапне тĕл тивнĕ.

Индири лару-тăру

ЛОНДОН, августăн 26-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 24-мĕшĕнче Калькуттăпа Бомбейра çĕнĕрен демонстрацисем пуçланса кайнă, темиçе провинцире хумханусем пулса иртнĕ.

Америка бомбардировщикĕсем Çурçĕр Франци çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, августăн 25-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн «Вĕçекен крепость» йышши бомбардировщикĕсем ĕнер Тре хулинчи суднăсем тăвакан верфь çине вĕçсе пырса тапăннă, вĕсемпе пĕрле Англи истребителĕсем вĕçсе пынă. Истребительсен ытти эскадрильисем Этретпа Абвиль хушшине вĕçсе тухнă. Америка бомбардировщикĕсене Германин сахалтан та 40 истребителĕ тапăнма хăтланнă. Сывлăшра хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Противникăн икĕ истребительне персе ӳкернĕ, темиçе истребительне сиенленĕ. Бомбардировщиксем пурте хăйсен базине ăнăçлăн вĕçсе таврăннă.

ТЫТКĂНРИ СОВЕТ ÇЫННИСЕНЕ КĂМĂЛЛАНАШĂН НОРВЕЖЕЦСЕНЕ МАССĂЛЛĂН АРЕСТЛЕНИ

СТОКГОЛЬМ, августăн 26-мĕш. (ТАСС). Швецире тухакан «Дагенс нюхетер» хаçат çапла пĕлтерет: Тромсе районĕнче (Çурçĕр Норвегире) квислинговецсен влаçĕсем Норвегин çурçĕр пайĕнчи концлагерьсенче асапланса пурăнакан тыткăнри красноармеецсене кăмăлланăшăн норвежецсене йышлăн арестленĕ.

ДАНИРЕ ГЕСТАПО ÇЫНСЕНЕ ЫТЛАРАХ АСАРХАМА ТЫТĂННИ

НЬЮ-ИОРК, августăн 26-мĕш. (ТАСС). «Нью-Иорк таймс» хаçат çапла пĕлтерет: Копенгагенра Германие хирĕçле саботаж ӳссе пынине пула Германин çар командованийĕ полици ĕçĕсене тума гестапона хушнă. Германи командованийĕн приказĕнче çапла каланă: Англи самолечĕсем Германие хирĕç саботажла ĕçсем тума час-часах парашютистсем антарса хăвараççĕ. Англи самолечĕсем çавăн пекех тата пулеметсем, винтовкăсем, револьверсем тата патронсем пăрахаççĕ, çав хĕçпăшалсем çине çапла çырнă: «Усă курмалла тесе пĕлтеричен пытарса хурăр», тенĕ.

КĔСКЕН

** Париж тата Краков хулисенче ученăйсене арестленине хирĕçлесе Германие протест яма сĕннине Чили сеначĕ ырланă.

** Грецире кунсерен выçăпа икĕ пин çын ытла вилет.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ОБЪЯВЛЕНИЕ

Доводится до сведения граждан, что с 1 августа 1942 года справки о местожительстве эвакуированных будут выдаваться только Центральным справочным бюро на эвакуированных, находящемся в г. Бугуруслане, Чкаловской области.

Справочные бюро в республиках, краях и областях ликвидируются, поэтому справки на эвакуированных там выдаваться не будут.

В целях ускорения наведения справок, рекомендуется запросы в Центральное справочное бюро посылать почтовыми открытками с обратным ответом, которые продаются в почтовых отделениях Наркомсвязи.

В запросах необходимо указывать ясно фамилию, имя, отчество (полностью), год и место рождения и место жительства до эвакуации лица, о котором наводится справка, а также адрес заявителя. Запросы следует посылать на каждое лицо в отдельности.

При отсутствии специальных открыток, запросы могут быть посланы простой почтовой открыткой, но с обязательным указанием сведений, предусмотренных выше.

Запросы следует адресовать: Центральное справочное бюро на эвакуированных, г. Бугуруслан, Чкаловской области.

Центральное справочное бюро высылает справки только о местожительстве эвакуированных. Никакими другими материалами (о военнослужащих, учащихся, месте расположения учреждений и предприятий) не располагает и справок по этим вопросам не выдает.

ЦЕНТРАЛЬНОЕ СПРАВОЧНОЕ БЮРО НА ЭВАКУИРОВАННЫХ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакции секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1359 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.